# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

## «Экологи»

***«Экологи» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 4041,0 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 11 проекчĕ пурнăçланать.***

***Наци проектне пурнăçланă май Раççейре 5 çĕнĕ наци паркĕ (пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 3 млн га) йĕркелемелле. 4,3 млн ытла çын çут çанталăкри хутĕлесе тăракан территорисене çитсе курĕ. Хуласен территорийĕсенчи пурĕ 16 санкцилемен çӳп-çап свалкине, экологи тĕлĕшĕнчен сиенлĕ хутăшсем пухса тăракан юхăннă предприятисене, промышленноç тасамарлăхĕ пуханнă вырăнсене пурĕ 17 объект пĕтермелле. Çӳп-çап ыйтăвне татса памалла. Ĕçмелли паха шывпа тивĕçтернĕ çынсен йышĕ палăртнă çулсенче Раççейре пурăнакансен 87,5 процентне çитмелле. Атăлăн кăнтăр территорийĕнче юхан шывсене, кӳлĕсене, пĕчĕк юхан шывсене пурĕ 32 тăваткал километр çĕнĕ пурнăç памалла. Вăрмансенче пушар тухнин сиенне, 2018 çултипе танлаштарсан, 12 млрд тенкĕ таран чакармалла. Нацпроект пилĕк енĕпе ĕçлемелле: çӳп-çап, шыв, сывлăш, çут çанталăк тата чĕр чунсем. Çапла шывпа сывлăша тасарах тумалла, вăрмансемпе сайра тĕл пулакан чĕр чунсене упраса хăвармалла, заводсене хăрушлăхсăр технологисемпе ĕçлесси çине куçармалла.***

# Республикăра пурнăçлакан ĕçсем калăпăшлă тата пĕлтерĕшлĕ

Чăваш Республикинче «Экологи» наци проекчĕ шайĕнче регион проекчĕсем 6 пурнăçа кĕреççĕ. Вĕсем çаксем:

– «Комплексная система обращения с твердыми коммунальными отходами»;
– «Чистая страна»;
– «Оздоровление Волги»;
– «Сохранение лесов»;
– «Сохранение уникальных водных объектов»;
– «Чистая вода».

2019 çулта Чăваш Енре 4 регион проекчĕпе ĕçлесе пынă: «Комплексная система обращения с твердыми коммунальными отходами», «Оздоровление Волги», «Сохранение лесов», «Чистая вода». Регион проекчĕсемпе пăхнă ĕçсене пурнăçа кĕртме 586,3 млн тенкĕ уйрнă. 2020 çултан тытăнса «Чистая страна» проекта пурнăçа кĕртме тытăнаççĕ. Ĕçсене пĕтĕмĕшле 1 млрд та 631,6 млн тенкĕлĕх туса ирттермелле пулать.

**«Комплексная система обращения с твердыми коммунальными отходами»**

Асăннă регион проектне пурнăçа кĕртме 2019 çулта пĕтĕмпе 49,4 млн тенкĕ уйăрнă. Вăл шутран 46,4 млн тенкĕ – федераци укçи-тенкине, 2,965 млн тенкĕ – республика бюджетĕнчен – Çĕмĕрле районĕнчи çӳп-çап тиекен станци валли оборудовани туянма. Çӳп-çап тиекен станцисене Çĕмĕрле районĕсĕр пуçне Вăрнар (2020 çулта), Патăрьел (2021 çулта) районĕсенче те йĕркелеме пăхнă.

**«Оздоровление Волги»**

Регион проектне пурнăçа кĕртме иртнĕ çул 335 млн тенкĕ уйăрнă (330,8 млн тенкĕ – федераци бюджетĕнчен, 4,5 млн тенкĕ – республика бюджетĕнчен). Асăннă проект шайĕнче Шупашкарта çумăр шывне тасатмалли сооруженисем туса хатĕрлеççĕ. 2019 çулта ĕçсене 104,5 млн тенкĕлĕх туса ирттернĕ, вăл шутран 103,5 млн тенкине федераци уйăрнă. Ĕçсене пĕтĕмĕшле 242,1 млн тенкĕлĕх пурнăçламалла.

Вăрнарта хуçалăхпа йăла тата производство объекчĕсен таса мар шывне тасатмалли хуçалăхпа йăла канализацийĕн коллекторне тăваççĕ. Объект пĕтĕмĕшле хута кайсан талăкра 1800 кубла метр таса мар шыв тасатма пултарĕ. Пĕтĕмĕшле çавна валли 406,6 млн тенкĕ уйăраççĕ. 2019 çулта ĕçсене 229,6 млн тенкĕлĕх пурнăçланă, вăл шутран 227,3 млн тенкĕлĕх – федераци уйăрнă укçапа.

Иртнĕ çулах Чăваш Ен Спорт министерствин «Белые камни» физкультурăпа сывлăх центрĕн тасатмалли сооруженийĕсен проектпа смета документацине хатĕрленĕ. Документаци хатĕрлеме республика бюджетĕнчен 0,88 млн тенкĕ уйăрнă. Объекта 2022 çулта реконструкцилеме палăртаççĕ.

Тасатмалли сооруженисем çĕнĕрен туса тата халĕ усă кураканнисене реконструкцилесе Атăла таса мар шыв кассине 2024 çул вĕçленнĕ тĕле 2,12 кубла километр чухлĕ чакарма палăртаççĕ.

**«Сохранение лесов»**

Проектпа пăхнă ĕçсем валли 2019 çулта 125,4 млн тенкĕ уйăрнă. Ку вăл пĕтĕмпех федераци укçи-тенки. Укçатенкĕпе çĕнĕ вăрман тăрăхĕсем лартса чĕртме усă курнă, йывăç лартмалли МЛУ-1М машина, ПКЛ-70 маркăллă икĕ плуг, вăрман патрулĕн 17 комплексне, вăрман сыхлавĕн оборудованийĕллĕ кустăрмаллă 15 трактор, пĕрле илсе çӳремелли 20 раци тата ытти техника туяннă. Вăрман йывăçĕсен вăрлăхне 153 кг хатĕрлесе хăварнă.

**«Чистая вода»**

Проект шайĕнче республикăра 2019 – 2020 çулсенче çак ĕçсене туса ирттереççĕ:

1. Шупашкарăн Çурçĕр-Хĕвел анăç районĕнчен тытăнса Чантăра çити 7,8 км тăршшĕ шыв пăрăхĕ хураççĕ. Çавна валли 70,5 млн тенкĕ уйăраççĕ. Ĕçсене 2020 çулхи июнь уйăхĕ тĕлне вĕçлеме палăртаççĕ. Çапла вара 880 ытла çынна пахалăхлă таса шывпа тивĕçтерме май килĕ.

2. Пăрачкав ялĕнче 27,5 км тăршшĕ шыв пăрăхĕ хураççĕ (2-мĕш тапхăр). Ĕçсене туса ирттерме 58,8 млн тенкĕ уйăраççĕ. Строительство ĕçĕсене 2020 çулхи октябрь уйăхĕччен вĕçлеме палăртнă. Малашне Пăрачкавра пурăнакан 6 пин ытла çынна гигиена нормативĕсене, санитарипе хими тата микробиологи кăтартăвĕсене тивĕçтерекен шывпа тивĕçтерме май пулать. Пăрăхсен усă курассин вăхăчĕ 50 çултан кая мар.

### Муркаш районĕнче

«Экологи» наци проекчĕ шайĕнче республикăра 6 регион проекчĕ пурнăçа кĕрет пулсан, вĕсенчен 3-шне пирĕн район хутшăнать.

**«Комплексная система обращения с твердыми коммунальными отходами»** проект шайĕнче районти 177 ялта çӳп-çап пухмалли контейнерсем валли 377 площадка йĕркеленĕ, 476 контейнер вырнаçтарнă. Контейнерсем туянма республика 5 млн ытла тенкĕ уйăрнă. Кун пек контейнерсем татах 600 кирлĕ пулаççĕ. Çитес вăхăтрах Ивановкăри йăла çӳп-çап полигонне модернизацилес, полигонăн иккĕмĕш черетне тăвас, кунта çӳп-çапа сортлакан пункт йĕркелес ыйту тăрать.

**«Чистая вода»** проект шайĕнче Ильинка ял тăрăхĕнчи Мăн Шашкар ялĕнче шыв системине çĕнĕрен тума палăртаççĕ. Ĕçсене 15 млн тенкĕлĕх туса ирттермелле пулать. Кунсăр пуçне республика Пуçлăхĕн иртнĕ çулхи ноябрьти указĕ шайĕнче те ялсенчи шыв башнисене тата шыв пăрăхĕсен системисене юсассипе кăçалах калăпăшлă ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Çак вăхăта кун пек 14 проект хатĕр. Проектсене пурнăçа кĕртме республика 24 млн ытла тенкĕ уйăрать.

**«Оздоровление Волги»** регион проекчĕпе Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте тасатмалли сооруженисем тума палăртаççĕ. Ĕçсем калăпăшлă. Пурте пĕр çул хушшинче пурнăçа кĕртме май пуррисем мар. Çапах та вĕсем пурте пĕлтерĕшлĕскерсем, çынсен пурнăç хăтлăхĕпе çыхăннăскерсем.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул**

# Тăван çĕршыва хӳтĕлессине мала хунă



**Сăн ӳкерчĕкре Евгений Васильев капитана куратăр. Çар ĕçĕнчи хăюлăхпа паттăрлăхшăн âна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, медальсемпе чыслані. Вăл Хĕвел анăç, Кăнтăр-хĕвел анăç, Белоруссин фрончĕсенче çапăçнă.**

Евгений 1921 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче Лапкас ялĕнче çуралнă. Ашшĕ Василий Семенович 1878 çулхи пулнă. Амăшĕ Ксения Николаевна унран кĕçĕнрехскер, 1939 çулта вилнĕ. Çав çулхине вĕсен ывăлĕ Евгений Сĕнтĕр шкулĕнчен 9 класлă пĕлӳ илсе тухнă та ун хыççăн Етĕрнери педагогика училищине пуçламăш классен учителĕн профессине илме кайнă. Вĕренĕве вĕçлесен çамрăк учителе Евгений Николаевича Шомик шкулне ĕçлеме янă.

1941 çулхи март уйăхĕнче вăл Сĕнтĕр çар комиссариачĕ урлă çар ретне тăнă, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме чăваш салтакĕ Ворошиловград хулине çитнĕ, хыççăн рядовой Евгений Витебск хули еннелле куçнă. Вăрçă пуçланни нумай вăхăт та иртмен, август уйăхĕнче Ярцево хули патĕнчи пĕр çапăçура âна амантнă, сипленме Саратов хулинчи 1681 номерлĕ эвакогоспитале вырнаçтарнă.

Çар пĕлĕвĕ фронтра питех те кирлĕ, âна Саратов облаçĕнчи артучилищĕне вĕренме янă. 1942 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнчи ПРиВО-н 0603 номерлĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн чăваш салтакĕ унтан офицер званийĕпе тухнă. Анчах та июль уйăхĕнчи пĕр хĕрӳ çапăçура âна каллех йывăр амантнă, тепĕр çулхи январь уйăхĕччен сипленме тивнĕ. Батарейăна ертсе пыракан Евгений 63 çарăн 664 артиллери полкĕн 129 стрелковăй дивизи йышĕнче Белорусси фронтĕнче çапăçнă. Аслă Çĕнтерĕве те вăл унти салтаксемпе кĕтсе илнĕ.

Уншăн çар ĕçĕ вĕçленмен-ха, малалла пынă. Днепр çывăхĕнчи çапăçура унăн сылтăм аллипе урине мина ванчăкĕ суранлатнă. Апла пулин те вăл подразделенирен уйрăлман, полкăн санитари чаçĕнче сипленнĕ. 1945 çулхи август уйăхĕнче Германинчен килсен âна артиллери полкĕн аслă офицерĕ пулма шаннă. Белорусси Çар округĕн 0654 номерлĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн âна 1946 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче саппаса кăларнă.

Тăван яла таврăнсан вăл вырăнти колхозра счетоводра ĕçленĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕнче 1926 çулта Лапкасра çуралнă Вера Петровнăпа мăшăрланнă. 1948 çулхи августăн 2-мĕшĕнче вăл Муркашри 7034 номерлĕ тĕп перекет кассин ертӳçинче ĕçлеме тытăннă, унта 11 çул тăрăшнă, хыççăн милицин районти уйрăмĕн секретарĕнче тата ытти ĕçре тимленĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Кĕрлет чĕрере вăрçă шавĕ

Вăрçăран таврăнман упăшкушăн,
Хĕрӳпеле тăват ывăлушăн
Пĕр каç та шуçăмччен çывраймарăн,
Хулпуççи çинчен çурла анмарĕ.

Мĕн хуйхи-ши тесе халь ан калăр,
Вăрçă иртнĕ тесе ал ан сулăр.
Кунĕ-çулĕ, паллах, малалла та,
Типеймест-çке куçу чун чăтсан та.

Асаннем ман ларать шап-шур пуçлă,
Асĕнче утать пуль пусă тăрăх,
Тинкерет пĕр тĕле шывлă куçлă,
Пир тĕрки хăй çумне пăчăртанă.

Чун тухса каиччен, юлашки сывлăшчен
Чăнахах та кĕтет упăшки килессе.
Куç тулли сăн-питне, паттăрла утăмне
Хăйĕнпе, май пулсан, тен каинччĕ илсе.

**Ӳрмек Васли.**